26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
5
ВЫРСАРНИКУН
177(6414) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет çамрăкĕсем кĕрешӳпе ĕçре

Паян—Пĕтĕм Тĕнчери Çамрăксен 29-мĕш кунĕ. Совет çамрăкĕсем çак куна виççĕмĕш хут ĕнтĕ хаяр çапăçусен хирĕнче, хĕрӳ ĕçсен вучахĕнче палăртаççĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăн тĕп йывăрлăхне совет халăхĕ тӳссе ирттерет. Этемлĕх историйĕ совет çамрăкĕсене тискер фашизма хирĕç кĕрешекенсен малти ретне тăратрĕ. Çак пархатарлă тивĕçе пурнăçа кĕртме—ылханлă тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкма, Тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен тасатма пирĕн вăй-хăват та, çирĕплĕх те çителĕклех! Çакна Ленин—Сталин партийĕ çитĕнтернĕ паттăрăру отечественнăй аслă вăрçă хирĕсенчи, предприятисемпе учрежденисенчи, колхоз уйхирĕсенчи хĕрӳллĕ кĕрешӳре кăтартса парать.

Чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕсем, аслă вырăс халăхĕн тата ытти тăванла халăхсен ывăл-хĕрĕсемпе пĕрле паттăррăн çапăçса, тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне, тăван халăхăн историллĕ традицийĕсене çӳлте тытса пыраççĕ. Тăшмана пĕтĕм чĕререн курайманни, тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр юратни çĕклет вĕсене—Атăл пăлхавçисен вĕри юнлă ăрăвĕсене—геройла ĕçсем тума!

Кам пĕлмест чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлне—Федот Никитич Орлова. Вăл—вилĕмсĕр Гастеллăн ученикĕ. „Юрататăп эпĕ Тăван çĕршыва!—тет пирĕн паттăр земляк Совет Союзĕн Геройĕ капитан Федот Орлов.—Эпĕ вилĕмрен хăрамастăп, вилĕм манран хăрать".

Аван чухлать вăл—ирĕклĕх мĕскер.
Чăваш ачи, хăй мăшкăл тӳснĕскер...
Аçта Орлов пырса çапать хастар,
Унта вара тăшманшăн пурнăç мар.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕсене икĕ пин çынна ытла орденсемпе медальсем парса наградăланă. Вĕсем хушшинче Совет Союзĕн геройĕсем—Геннадий Габайдулин, Борис Васильев, Мирон Ефимов, Лаптев юлташсем, ленинла-сталинла комсомол пăхса ӳстернĕ вуншар çамрăксем. 22 çулхи пулеметчик аслă лейтенант Иван Смирнов аслă Ленин хулишĕн арăслан пек çапăçнă. Шăмăршă районĕнчи Пуянкасси çамрăкĕ—22 çулхи капитан Илья Павлов çинчен пĕтĕм дивизире ырă ят çӳрет.

Чăваш халăх ывăл-хĕрĕсен фронтри паттăр ĕçĕсем орденлă республикăн чапне çĕклеççĕ, чăваш ĕççыннийĕсене вĕçĕмсĕр савăнтараççĕ, фронта вăйлăн пулăшса тăма хавхалантараççĕ. Республикăри ĕççыннисем пур çĕрте те хĕрӳ ĕçре çĕнтерӳ хĕçпăшалне туптаççĕ.

Ĕçре те çапăçури пекех! Çак шухăш-кăмăлпа пурăнать, ĕçлет кашни. Вăрçă кунĕсенче республикăн халăх хуçалăхĕ малалла вăйлăн аталанса пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсемшĕн пирĕн республика Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ. Пирĕн республикăна кăçал каллех Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă. Республикăри нумай предприятисем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса, Оборонăн Государственный Комитечĕн, ВЦСПС-па наркоматсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене илнĕ. Çак çитĕнӳсенче çамрăксем хисеплĕ вырăн йышăнчĕç.

Канашри вагонсем юсакан заводри çамрăксем хушшинче ĕç нормине тултарманнисем пачах çук. Заводри çамрăксенчен çурри ытла — стахановецсем. Токарь Канатин, слесарь-автоматчик Чуранов тата ытти вуншар çамрăксем кулленех ик-виçшер норма тултараççĕ.

Ялхуçалăхĕнчи мĕнпур йывăрлăха колхоз çамрăкĕсем тӳссе ирттереççĕ. Вĕсем колхоз уйхирĕсенче, фермăсенче, МТС-сенче тата ытти çĕрте те Тăван çĕршывпа фронт умĕнчи тивĕçлĕхе тарăннăн туйса ĕçлеççĕ. Элĕк районĕнчи „Венера" колхозри пуçламĕш организацире сăмахран, 19 комсомолец. Вĕсем пурте колхоз производствине активлăн хутшăнаççĕ. Советски районри Яккушкĕнчи „Пробуждение" колхозри çамрăксем, тăрăшса ĕçлесе, хăйсен колхозне районри малта пыракан колхозсен ретне кăларчĕç.

Кун пек тĕслĕхсене вуншарăн илсе кăтартма пулать.

Нимĕç захватчикĕсем ишĕлтернĕ хуласемпе заводсене юсаса йĕркеленĕ çĕре чăваш çамрăкĕсем те тухса кайрĕç. Унта вĕсем хăйсен ĕçченлĕхĕпе матурлăхне кăтартаççĕ, нимĕçсенчен ирĕке кăларнă районсенче пурнăçа йĕркелеме пулăшаççĕ.

Совет çамрăкĕ! Çамрăклăхри иксĕлми вăйхăватпа мĕнпур пултарулăха нимĕç вăрă-хурахĕсене тĕп тунă çĕре парар!

Фронтри чăваш çамрăкĕ! Эсĕ ылханлă тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте улăп-паттăр пул! Вĕлер нимĕçе, Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнипе Хĕвеланăçнелле чакса пыракан тăшмана сывлама памасăр хăвала!

Республика предприятийĕсемпе колхоз уйхирĕсенчи çамрăксем! Тăшмана хĕрӳ ĕçпе пыра-пыра çапăр! Ĕç нормине кашниех ирттерсе тултарар, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хăвăртрах вĕçлессишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлер!

ВКП(б) Обкомĕнче

Çĕрпӳ районĕнчи Лĕпсер ялсоветĕнчи колхозсен членĕсем çар çыннисен çемьисем валли тата тăван çĕршыва хӳтĕлесе çапăçура пуçĕсене хунă çынсен шкулсенче вĕренекен ачисем валли ăшă япаласем пухас ĕçе пуçарчĕç. Виçĕ кун хушшинче кăна вĕсем 280 япала пухнă. Лĕпсер ялсоветĕнчи колхозниксен пуçарăвне районри ытти колхозсемпе колхозниксем те йышăннă. Августăн 25-мĕшĕнчен пуçласа 29-мĕшне çитиччен районра пĕтĕмпе 1237 япала тата 137 килограмм çăм пухнă.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак ыйтăва сӳтсе-явса çапла йышăннă:

Çар çыннисен çемьисем тата шкулсенче вĕренекен ачасем валли ăшă япаласемпе кĕпе-йĕмсем пухас тĕлĕшпе Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксем тунă пуçарăва ырлас.

ВКП(б) райкомĕсемпе горкомсен секретарĕсене, ĕççынни депутачĕсен район тата хула совет испулкомĕсен председателĕсене, Çĕрпӳ районĕн примерĕпе, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухнипе пĕрлех, колхозниксемпе рабочисем тата служащисем хушшинче çар çыннисен çемьисем тата шкул ачисем валли ăшă япаласемпе кĕпе-йĕмсем пухассине организацилеме хушас.

ВЛКСМ Обкомне тата учительсен союзĕн Обкомне шкул ачисем валли ăшă япаласем пухас ĕçре комсомолпа учительсем хутшăнса ĕçлесси çинчен сӳтсе-явма хушас.

Икшер нормăран кая мар

КАНАШ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем ĕççыннисене мĕн тери хавхалантарни çинчен калама сăмахсем те çитмеççĕ. Предприятисенчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем тата служащисем кашниех хăйĕн савăнăçне ĕçре палăртма тăрăшать. «Авангард» артелĕн çĕвĕ çĕлекен цехĕнче А. Байкалова, М. Николаева юлташсем ĕç нормине 160-шар процент тултарса пынă. Халĕ вĕсем кулленех икшер норма тултарма тытăнчĕç. Вĕрен явакан цехри П. Чаронин юлташ, иртнĕ вăхăтра нормăна 115 процент тултарса ĕçленĕскер, ĕнер 214 процент тултарчĕ. Артельте халĕ икшер норма тултаракансем вуншарăн шутланаççĕ. Кашни икĕ норма тултарма тăрăшать.

Артель коллективĕ производство планне август уйăхĕнче 124 процент тултарнă, сентябрьте 150 процент тултарма сăмах пачĕ.

Ăшă япаласем пухаççĕ

СЕНТЕР. (Телефонпа). Шашкарти «Аврора» колхоз членĕсем, Хĕрлĕ Çар фронтра çĕнтерӳсем туса пынипе хавхаланса, фронтовиксем валли ăшă япаласем пухаççĕ. Çак кунсенче вĕсем 9 тир, 2 килограмм çăм, 20 метр пир тата ытти те çылăй пухрĕç: Пелагея Соловьева колхозница 10 метр пир, Наталья Туритова 400 грамм çăм пачĕç.

Фронтовиксем валли ăшă япаласем пухасси малалла пырать.

М. КАРПОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂРАН

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче ДОНБАСРА пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă, 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 150 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ПРОЛЕТАРСК хулине, ВЕРХНЕЕ хулине, ПОПАСНАЯ хулине, ПЕРВОМАЙСК хулине, ИРМИНО хулине, КАДИЕВКА хулине, ПАРИЖСКАЯ КОММУНА хулине, ЗУГРЕС хулине, халăх пурăнакан пысăк пунктсене: КАЛИНОВО, КРИВОРОЖЬЕ, БРЯНСКИЙ, ЛОЗОВАЯ-ПАВЛОВКА, АЛЕКСЕЕВО-ОРЛОВКА пункчĕсене тата çак пысăк чугун çул станцийĕсене: ЛОСКУТОВКА, НЫРКОВО, КАМЫШЕВАХА, МАНУЙЛОВКА, ЧЕРНУХИНО, РАССЫПНАЯ, СЕРДИТАЯ, ЗУЕВКА станцийĕсене йышăнса илнĕ.

КОНОТОП хули енче пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 15 километртан пуçласа 25 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутран ШОСТКА хулине, ВОРОНЕЖ-ГЛУХОВ хулине, ПУТИВЛЬ хулине, БЕЛОПОЛЬЕ хулине, ВОРОЖБА хулипе чугун çул узелне, халăх пурăнакан пысăк пунктсене: КЛИШКИ, ЧЕПЛЕЕВКА, КРАСНОПОЛЬЕ, ЛЕНИНСКОЕ, РЕЧКИ пункчĕсене тата çак чугун çул станцийĕсене: СВЕССА, МАКОВО, ТЕРЕЩИНСКАЯ, АЛТЫНОВКА, НОВО-ЕЛЕНОВКА станцийĕсене йышăнса илнĕ.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче 4 километртан пуçласа 6 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ.

Пирĕн БРЯНСК хулинчен кăнтăртарахра наступлени туса пыракан çарсем уйрăм участоксенче 6 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăнса илнĕ.

ХАРЬКОВРАН хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса тата унăн контратакисене сире-сире ярса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатасшăн малалла тапăнса çапăçнă.

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 107 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 45 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Донбасра пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман çулсем çине минăсем лартса хăварать, çулсене пӳле-пӳле хурать, кĕперсене сирпĕте-сирпĕте ярать. Пирĕн боецсем, çав чăрмавсене пурне те çĕнтерсе, нимĕçсене вĕсенчен пĕр татăлса юлмасăр хăваласа пыраççĕ, 20 километр таран малалла куçнă. Пирĕн пехотнăй тата танковăй соединенисем, питех те хăвăрттăн пырса çапса, Пролетарск, Верхнее, Попасная, Первомайск, Ирмино, Кадиевка, Парижская Коммуна, Зугрес хулисене тата халăх пурăнакан пысăк пунктсемпе чугун çул станцийĕсене нумай йышăнса илнĕ. Кун каçичченхи çапăçусенче тăшманăн 4000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 54 танкне тата 600 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Пирĕн чаçсем артиллери хĕçпăшалне нумай тытса илнĕ, боеприпассен, инженерла пурлăхăн тата продовольствин темиçе вунă складне илнĕ. Çавăн пекех тата нумай паровоз тата тĕрлĕрен çар грузĕсем турттарса пыракан темиçе çĕр вагона тытса илнĕ.

* * *

Конотоп хули енче пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла ăнăçлăн куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем Шостка хулипе чугун çул станцине, Воронеж-Глухов хулине тата Сумы облаçĕнчи халăх пурăнакан ытти темиçе вуншар пункта йышăнса илнĕ. Пĕр пункта йышăнса илнĕ чухне кăна 26 тупă, 15 миномет тата çар грузĕсем тиенĕ 80 автомашина ытла туртса илнĕ. Тепĕр участокра совет çарĕсем, аркатса тăкнă тăшмана хăваласа пырса, Путивль хулине йышăнса илнĕ. Малалла тапăнса пырса, пирĕн чаçсем темиçе тĕлте Сейм шывĕ урлă каçнă та нимĕçсен Ворожба хулипе паха чугун çул узелне хӳтĕлесе тăракан пысăк вăйĕсемпе çĕр каçиччененех хаяррăн çапăçнă. Тăшмана халран ярса, совет боецĕсем тул çуттипе татăклă атака пуçласа янă та хулана темиçе енчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Хаяр çапăçусем хыççăн Ворожба хулине нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, халĕ вĕсене шута илеççĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пункт районĕнче нимĕçсен 184-мĕш пехотнăй полкĕн пĕр роти пĕтĕм составĕпех тыткăна парăннă.

* * *

Смоленск енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Дорогобуж хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсене вăйлă çирĕплетнĕ позицисенчен çапса кăларнă. Çав çапăçура тăшманăн 1 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Стрелоксен йышлă хĕçпăшалне тата боеприпассен 2 складне тытса илнĕ. Ельня хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман хăйĕн çĕмĕрсе тăкнă чаçĕсене йĕркелесе тата танксен пысăк вăйĕсене илсе пырса, кун каçиччен темиçе хут контратака тунă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă. Тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Туллимар данпайсем тăрăх, пирĕн çарсем кун каçичченхи çапăçусенче нимĕçсен 3000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. 25 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 5 тупă тата 41 хир туппи пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 14 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Брянск хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă.

Комаричи хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединенин чаçĕсем, малалла куçса, халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ. Тăшман хаяррăн хирĕç тăрать, анчах та совет боецĕсем пыра-пыра çапнипе хăйĕн позицийĕсене пĕрин хыççăн теприне хăварса каялла чакать. Кун каçиччен нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. 3 юсавлă танк, 8 тупă, боеприпассен 3 складне тата пĕр тĕштырă складне тытса илнĕ.

Севск хулинчен хĕвеланăçнерехре нимĕçсем, пирĕн малалла тапăнса пыракан чаçсене чарма хăтланса, хăйсен пехотипе танкĕсене контратакăна кĕрте-кĕрте яраççĕ. Совет боецĕсем тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă, гитлеровецсене пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 8 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 туппа, 14 хир туппине тата 144 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. 13 тупă тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Сумы хулине йышăнса илнĕ хыççăн пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçнă.

Харьковран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, тăшманăн хаяр контратакисене сирсе ярса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 14 танкне, вăл шутра „тигр" йышши 10 йывăр танкне, персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Харьковран кăнтăртарахра пĕр чаçри боецсем нимĕç салтакĕсемпе офицересене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура пирĕн боецсене Николай Никитович Гуренев колхозник пысăк пулăшу панă. Красноармеецсем çав пункт хĕррине вăркăнса кĕрсе кайсанах Гуренев нимĕç пулеметчикне вĕлернĕ. Унтан вăл пирĕн танкистсене тăшман танкĕсем, хăй тĕллĕн çӳрекен туписем тата автоматчикĕсем пĕр çĕре пухăнса тăнă айлăм патне ертсе кайнă. Ку айлăмра тăшман пирĕн подразделенисене флангран пырса çапма хатĕрленсе тăнă. Пирĕн боецсем, питех те хăвăрттăн пырса çапса, нимĕçсене аркатса пăрахнă, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 туппа туртса илнĕ. Çав çапăçура Гуренев юлташ хăй те 5 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ çĕрле халăх пурăнакан пĕр пункта пырса кĕнĕ те, автоматсемпе персе тата гранатăсем вăркăнтарса, нимĕçсен 40 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Волынь облаçĕнче кĕрешекен партизансен 3 отрячĕ, минăсем лартса пĕр эрне хушшинче нимĕçсен 14 çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 12 паровоз тата тĕрлĕрен çар грузĕсем турттарса пыракан 90 вагон пĕтнĕ.

Ишлей районĕнчи Мамăшри Буденный ячĕпе тăракан колхозра тырă вырнă вăхăтра ясли организациленĕ. **Ӳкерчĕк çинче: Колхозниксен** ачисем ĕç вăхăтĕнче яслире выляса-кулса пурăнаççĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Республика уйхирĕсенче

Пур колхозсем те тырă вырса пĕтерне

ÇĔРПӲ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнер районри пур колхозсем те тырă вырса пĕтерчĕç. Государство планĕнчен ирттерсе оборона фондне хывма акнă 350 гектар тырра та пĕтĕмĕшпех вырса пухнă.

Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт парассишĕн кĕрешес тĕлĕшпе Вăрнар районĕнчи колхозсем пуçарнă социализмлă ăмăрту районра сарăлсах пырать. „Красный Октябрь" колхоз (председателĕ Иванова юлташ) районра пуринчен малтан тырă вырса пĕтерчĕ, августăн 31-мĕшĕнче государствăна тырă пĕтĕмĕшпех парса татрĕ. Халĕ „Красный Октябрь" колхоз членĕсем кунĕн-çĕрĕн кĕлте турттараççĕ, хĕрсех авăн çапаççĕ.

Государствăна тырă парас ĕç районри колхозсенче вăйланса пырать. Иртнĕ пилĕккунлăхри графика район ирттерсе пурнăçларĕ. Хатĕрлев пунктне 383 тонна тырă леçнĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен пирвайхи тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçлаççĕ.

Кĕраки вĕçленсе пырать, чылай колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç те ăнăçлăн сарăлса пырать.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ыраш акса пĕтертĕмĕр

ШĂХАСАН. Пирĕн „Ямурза" колхоз кĕрхи тырăсене августăн 28-мĕшĕнче планпа пăхниччен виçĕ кун хăвăртрах акса пĕтерчĕ. Килес çулхи вăйлă тырпулăн никĕсне эпир вăхăтра тата лайăх хывса хăвартăмăр. Колхозниксем кĕракинче те ытти ĕçсенчи пекех хавхаланса ĕçлерĕç. Хĕрлĕ Çар отечественнăй аслă вăрçăра пысăк çĕнтерӳсем туса пынипе савăнса ĕçлетпĕр. Пĕтĕм вăя ĕçе хуратпăр. Тĕслĕхрен, Исаев Никита, Петрова Мария, Осипова Евдокия, Иванов Николай колхозниксем акара кулленех икшер çыншăн ĕçлерĕç, икшер норма тултарса пычĕç. Тырă акакансем С. Петров, З. Димитриев тата Н. Романов юлташсем иртен пуçласа каçченех ывăнма пĕлмесĕр тимлĕн ĕçлерĕç. Çавăн пекех сӳрелекенсен те ĕç тухăçлăхĕ пысăк пулчĕ.

Халĕ пирĕн „Ямурза" колхозра хĕрсе кĕлте кӳреççĕ, авăн çапаççĕ. Кĕраки тунă колхозниксем кĕрхи çĕртме тăваççĕ.

И. НЕСТЕРОВ,
Колхоз бригадирĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе кая хăвармалла мар

ТĂВАЙ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн районри колхозсем тырă вырса тата кĕраки туса пĕтерессишĕн тимлĕн кĕрешнипе пĕрлех, кĕрхи çĕртмене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса хăвартма тăрăшаççĕ. ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ республикăри колхозсенче кĕрхи çĕртме туса ирттерес тĕлĕшпе йышăннă постановлени пурнăçа кĕртсе пырса, Тăвай районĕнчи колхозсем августăн 25-мĕшпе сентябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче 450 гектар кĕрхи çĕртме турĕç. Пилĕккунлăхри графика район çĕр процентпех пурнăçларĕ. „Красная Чувашия" колхоз çак вăхăтра 85 гектар кĕрхи çĕртме турĕ. „Звезда" колхоз тырă вырса пуçтарчĕ, кĕраки туса пĕтерчĕ тата 37 гектар кĕрхи çĕртме турĕ. Ку колхозсенче лашасемпе туллин усă кураççĕ.

ИВАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ХĂМЛА ТАТАÇÇĔ

ОКТЯБРЬСКОЕ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче хăмла татса пухма тытăнчĕç. „20 лет Чувашии", „Восток", „Заря" колхозсем çак ĕçе пысăк хăвăртлăхпа туса пыраççĕ, вĕсем государствăна хăмла пама пуçларĕç.

Анчах районри хăшпĕр колхозсем государствăна хăмла хатĕрлесе парас ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ-ха. „Красная Чувашия" колхозăн хăмла карти 8 гектар. Иртнĕ çулта хăмла пухас ĕçе кая хăварса ку колхоз пысăк тăкак турĕ, кăçал та çавăн пекех. Хăмла татма халĕ те тытăнман. „Звезда" колхозра хăмла авăнне халĕ те юсаман. Кунта кӳршĕри колхозсем те хăмла типĕтме палăртнă. Анчах „Звезда" колхоз председателĕ С. Яковлев юлташ авăна юсама тытăнмасть.

Н. КОНДАКОВ.

Колхоз пурлăхне лайăх сыхлаççĕ

Шăхасан районĕнчи «Заря» колхозра колхоз пурлăхне сыхлас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Пушар дружинин начальникĕ Павлов хуралçăсем мĕнле сыхă тăнине кашни кунах тĕрĕслет. Пушар дружининче ĕçлекенсем Я. Павлов, С. Евграфов, Н. Никитин хăйсен ĕçне лайăх туса пыраççĕ. Вĕсем талăкĕпех хурал тăраççĕ, пушарпа кĕрешмелли хатĕрсене типтерлĕ, лайăх тытса усраççĕ.

Итемсем çинче насоссем, шыв тултарнă каткасем, табак туртмалли уйрăм вырăнсем пур. Пуринчен ытларах кунта колхоз тырпулне сыхлассине çирĕп йĕркеленĕ. Кашни итем çинчех икшер хуралçă талăкĕпех тăраççĕ. Фермăсемпе лаша витисенче, колхоз килкартийĕсенче, амбарсем патĕнче те хуралçăсем пур.

Ку колхозра уйри çĕмелсене те мĕн капана хывса пĕтеричченех аван сыхласа тăраççĕ. Е. Фадеев, И. Викторов, Н. Алексеев колхозниксем ялан уйра çӳреççĕ. Вĕсем çĕмелсене выльăх-чĕрлĕхсем ватасран тата ытти инкек-синкек пуласран та çирĕппĕн сыхлаççĕ.

Колхоз пурлăхĕ—вăл халăх тупри пулса тăрать. Халăх туприне куç шăрçине сыхланă пек çивĕччĕн сыхламалла.

СТЕПАН АСЛАН.

КОМСОМОЛ ЙЫШĔ ӲСЕТ

КАНАШ. Комсомолăн Сиккассинчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организацийĕ кăçал хăйĕн ретне татах 9 çамрăка йышăнчĕ. Вĕсем пурте ĕçре малта пыраççĕ. Халĕ тепĕр 5 çамрăк комсомола илме ыйтса заявлени пачĕç.

И. МАКСИМОВ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Забиякин цехĕнчи комсомолецсем

КАНАШ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Отечественнăй аслă вăрçă пуçланаччен вагонсем юсакан заводри Забиякин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра пĕтĕмпе те 20 комсомолец кăна пулнă. Вăрçă кунĕсенче кĕске вăхăт хушшинчех 20 комсомолец вуншар çамрăка производство ĕçне вĕрентрĕç. Комсомолец Плясунов 12 çамрăка, Рылина—7 çамрăка, Люсина 9 çамрăка вĕрентнĕ.

Вĕсем ку ĕçе юратса туни палăрать. Чи малтанах çамрăксем ватă рабочисем мĕнле ĕçленине сăнаççĕ, вĕсен ĕç меточĕсемпе паллашаççĕ. Унтан çăмăлтарах ĕçсене хутшăнма пуçлаççĕ, каярахпа йывăр ĕçсене тума та хăнăхса çитеççĕ.

Малтан ученица пулса ĕçленĕ Крупская тата Хижняк юлташсем халĕ мастерсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем заданисене лайăх пурнăçласа пыраççĕ.

Чи лайăх стахановецсем ленинла-сталинла комсомол ретне кĕресçĕ. Халĕ кунта 20 комсомолец мар, 75 комсомолец шутланать. Вĕсенчен 50-шĕ стахановецсем, 25-шĕ ударниксем. Çамрăк комсомолец Можаков юлташ производство заданине 400 процент, Канатин—350 процент, Чуранов—300 процент, тултараççĕ. Комсомол организацин секретарĕ Янович тата группăри организатор Волкова юлташсем—производствăри чи лайăх рабочисем. Союзра тăман çамрăксем вĕсен примерĕпе ĕçлесе пыраççĕ.

Ку пĕр цехри комсомолецсем çеç-ха. Заводра пĕтĕмпе çĕршер комсомолец. Вĕсенчен 285-шĕ стахановецсем, ыттисем ударниксем. Икĕ норма тултаракансем 183, виçĕ норма тултаракансем—102 çын. Заводра нормăна тултарайман çамрăксем пĕрре те çук.

Н. СКРЫПНИК,
Вагонсем юсакан заводри ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ.

Ĕçре пуçарса пыраççĕ

ЭЛĔК. Комсомолăн «Венера» колхозри пуçламĕш организацийĕнче пурĕ 19 комсомолец. Вĕсем кашниех колхозра активлă ĕçлеççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1943 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление комсомолецсем ятарласа пуху туса сÿтсе явнă, вĕсем колхоза çитменлĕхсене пĕтерме чылай пулăшрĕç.

Малтанхи кунсенче колхозра тырра пĕтĕм бригадипе выратчĕç. Комсомолецсем сĕннĕ тăрăх, колхозниксем звенопа ĕçлеме тытăнчĕç. Çавăн пекех ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕç. Колхозра, звеносенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Ĕçри ударниксене палăртса пырас тĕлĕшпе кăтарту хăми организациленĕ.

Кунсăр пуçне, колхозра куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав пур. Колхозра пĕрлешÿллĕ столовăй ĕçлет. Çак ĕçсем пĕтĕмĕшпех комсомолец-агитаторсем тăрăшнипе пулнă.

ВЛКСМ организацийĕн секретарĕ А. Иванова хăй пĕрремĕш бригадăра агитатор пулса ĕçлет. Вăл кашни кунах колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсем çинчен, çĕнĕ постановленисемпе ытти хыпарсене ăнлантарса парать. Колхозсем ĕçре ир-ирех тухса сĕм тĕттĕм пуличчен ĕçлеççĕ. Ĕçри ударниксене стена хаçачĕсем палăртса тăраççĕ. Çак бригада колхозри куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Комсомолецсен ĕçне кура, колхоз çамрăкĕсенчен комсомола кĕрекенсен йышĕ ÿссех пырать.

К. СОЛОВЬЕВ.

Комсомола кĕнĕ çамрăксем примерлă ĕçлеççĕ

ЕТĔРНЕ. Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхозри ВЛКСМ пуçламĕш организацийĕ юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ. Юлашки икĕ уйăх хушшинче комсомол ретне çĕнĕрен 26 çамрăка илнĕ. Çĕнĕрен комсомола илнисем пурте колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеççĕ, агитацилллĕ-массăллă ĕçе йĕркеллĕ туса пыраççĕ.

Çамрăк комсомолец Н. Николин паянхи кунччен 149 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Вăл пур ĕçре те тăрăшса ĕçлет. Кĕрхи акара план тăрăх кунне пĕр гектар сухаламалла пулин пулсан вăл яланах 1,2—1,3 гектар сухалать. Кĕлте турттарнă çĕрте нормăна 14—15 процент тултарса пырать. М. Коновалова 15 çулта кăна. Çамрăк пулин те, вăл çитĕнсе çитнĕ çынсемпе танах ĕçлет. Акă, ыраш вырнă чух кун нормăна 0,1 гектар вырмалла пулнă. Вăл 0,12—0,13 гектар ĕçлерĕ. Тăватă уйăх хушшинче Коновалова юлташ 75 ĕçкунĕ ĕçлесе нормăна 120—130 процент тултарса пычĕ.

И. Зайцев—призывник. Хĕрлĕ Çара кайиччен вăл, хастарлăн ĕçлесе, колхоза пулăшса хăварасшăн. Суха тунă çĕрте те нормăна ирттерсе тултарса ĕçлерĕ, кĕлте кĕртсе авăн çапнă çĕрте те тимлĕн ĕçлет.

Колхозра стахановла ĕçленисĕр пуçне, вăл колхозниксен юратнă агитаторĕ пулса тăрать. Колхозниксем каннă вăхăтра Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, хамăр çĕршывра тата ют çĕршывсенче пулса иртекен событисене [illegible] ăнлантарса парать. П. Николина та колхозра тăрăшса ĕçлет. Паянхи кунччен 107 ĕçкунĕ тума ĕлкĕрнĕ.

Çĕнĕрен кĕнĕ комсомолецсем колхоз производствинче татах та тăрăшса ĕçлеме, колхозниксем хушшинче агитмассăллă ĕçе кулленех туса пыма пулăç.

А. КРАСНОВ.

„Большевик“ стена хаçачĕ

„Уборка вăхăчĕ—хĕрÿллĕ вăхăт. Эпир ыраш вырса пулать, авăнне те çапас пулать, государствăна та тырă парас пулать, тырпне те акса хăварас пулать. Уборка ĕçне вăхăтра тата пысăк тухăçлăхпа туса [illegible] кирлĕ. [illegible] колхозри комсомолецсем ĕçре хурçă пек çирĕп пулса ĕçлемелле. Тырпула вăхăтра тата тирпейлĕ пухса кĕртни эпир тăшмана хăвăртрах аркатса тăкмалли вăхăта çывхартатпăр. Пурте [illegible] ĕçе тухăр!" Ак çак сăмахсемпе пуçланать Астакассинчи (Сĕнтĕрвăрри р.) уйăхра виçĕ хут туса тăракан колхозри стена хаçачĕ.

Эпир чи малтанах „Большевик“ хаçатăн 8-мĕш номерне пăхса тухар. Ку хаçата уборкăна тухас умĕн кăларнă. Унта колхозниксем уборкăна мĕнле хатĕрленни çинчен çырнă. Хаçатра пĕтĕмпе 9 статья.

Хаçатăн тепĕр номерĕ июлĕн 20-мĕшĕ кунĕнче 3—5-мĕш бригадăсенчи колхозниксем тырра çурласа вырма тухса, малтанхи кунах 10 гектар вырни çинчен пĕлтерет. 1—2—4-мĕш бригадăсенчи колхозниксем [illegible] 9—10-мĕш номерсем—[illegible] уборка пуçланса [illegible]. 5-мĕш бригадăри (бригадирĕ Львов комсомолец) колхозниксем хаçат [illegible] ĕçлеме пулăшрĕ. [illegible]

[illegible] правленийĕ премии пама палăртнă.

Хаçатри тепĕр статьи [illegible] çÿрекенсене критиклет, ĕçе хĕвел тухсан 8—9 сехетре тин тухнăшăн [illegible]

Кашни хаçатрах кулăш тата йĕплĕ сăмахсем кĕтессе пур. [illegible] 5-мĕш бригадăри [illegible] Л. Яронов [illegible] Анчах Леонид [illegible] Уй хуралçи Романов [illegible] Ун çинчен хаçатра [illegible] çырнă.

„Большевик“ хаçатăн редакторĕ пулса фронтран аманса таврăннă комсомолец И. Трифонов юлташ ĕçлет. Вăл хаçатра колхозри [illegible] çырса пырать. „Большевик“ хаçатан [illegible]

Комсомолецсем колхозра [illegible] „Пирĕн земляксем" [illegible] „Чăваш Коммуни" [illegible] тата районра тухакан „Ударник" хаçатсем [illegible] „Хисеп хăми" те пур.

В. ЛЮБИМОВ.

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем

Дивизи хаçатĕнче кун çинчен кĕске кăна информациллĕ заметка тухрĕ:

«Совет патриочĕ» хаçатăн редакцинче награда илнĕ чăваш боецĕсемпе командирĕсен слечĕ пулса иртрĕ... Хăйсен республикин ÿсĕмĕсем çинчен доклад итлевĕ хыççăн, чăваш воинĕсем, пĕрин хыççăн тепри, хăйсен çапăçури ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç. Вĕсем икĕ хутчен награда илнĕ старши лейтенант П. Косолапов, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерĕсен—капитан И. Павловпа медицина службин лейтенанчĕ Ф. Емельянов, разведчик Паликов тата ытти юлташсен калавĕсене питĕ пысăк интереспа итлерĕç... Унтан чăваш халăхĕ патне çыру çырса ячĕç».

Çак слет вăл—пирĕн чаçри чăвашсемшĕн питех те пысăк событи пулчĕ. Тахçантанпах пĕр-пĕринпе паллашма ĕмĕтленсе пурăннă земляксем кунта тĕл пулса хăйсен иртнипе халăхи боевой ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç, малашнехи ĕмĕчĕсем çинчен пĕлтерчĕç.

Тăхăр чăваш пуртe нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçса паттăр ĕçсем тунăшăн орден е медаль илнĕскерсем, пĕрин хыççăн тепри тухса калаçрĕç, итлекенсене чĕреренех пăлхантаракан историсем каласа пачĕç. Вĕсем çинчен манăн хамăрăн чăваш халăхне кĕскен те пулин пĕлтерессĕм килет, мĕншĕн тесен вĕсем чăваш халăхĕн чăн-чăн паттăр ывăлĕсем пулса тăраççĕ!

ССР СОЮЗĔН ОРДЕНĔСЕМПЕ ТАТА МЕДАЛĔСЕМПЕ НАГРАДĂЛАНĂ ЧĂВАШ БОЕЦĔСЕМПЕ КОМАНДИРĔСЕМ. Ÿкерчĕк çинче: Пĕрремĕш рет (сулахайран сылтăмалла): медицина службин лейтенанчĕ Ф. ЕМЕЛЬЯНОВ (Хĕрлĕ çалтăр орденĕ); капитан И. ПАВЛОВ (Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ): старши лейтенант Б. КОСОЛАПОВ (Отечественнăй вăрçăн 1-мĕш степенлĕ орденĕпе „За боевые заслуги" медаль); медицина службин старши лейтенанчĕ М. ГРИГОРЬЕВ („За отвагу" тата „За боевые заслуги" медальсем). Иккĕмĕш рет (сулахайран сылтăмалла)—красноармеец-сапер Я. СМОЛЬКОВ („За отвагу" медаль); сержант Н. АЗЮХИН („За боевые заслуги" медаль); старши лейтенант Л. АГАКОВ („За боевые заслуги" медаль); ефрейтор КАЛМЫКОВ („За боевые заслуги" медаль).

1. ÇИРĔМ ÇУЛХИ КАПИТАН

Ун пеккисем çинчен: «Вăл вăрçăра ÿснĕ»,—теççĕ. Чăнах та çав, капитан Илья Николаевич Павлов отечественнăй вăрçăн çулĕнче ÿснĕ.

Вăрçă пуçланнă чухне вăл 18 çулта пулнă. Патăръелĕнчи педучилищĕрен вĕренсе тухнă та, хăйĕн тахçанхи ĕмĕтне—Хĕрлĕ Çар командирĕ пулассине пурнăçа кĕртес шутпа, тÿрех С. хулинчи артиллерийски-минометнăй училищĕне кайса кĕнĕ. Анчах нумай вĕренме тÿр килмен унта: вăрçă пуçланнă.

Пĕр ирхине училище начальникĕ пур курсантсене те строя тăратнă та:

— Кам хăйĕн ирĕкĕпе фронта кайма килĕшет?—тесе ыйтнă.

Пурте харăсах ал тăратнă. Вара начальник утмăл курсанта суйласа илнĕ, вăл шутра Шăмăршă районĕнчи Пуян-Касси йĕкĕчĕ Илья Павлов та пулнă...

Ик эренерен вăл фронта çитнĕ. Смоленск патĕнчи калама çук йывăр çапăçусене лекнĕ. Хĕрлĕ Çар ун чух чакнă, анчах та нимĕçсем совет çĕрĕн кашни метрĕшĕн темĕн чухлĕ юн тÿленĕ. Калама та çук хытăн хирĕç тăнă пирĕн боецсем. Илья Павловсен подразделенийĕ, сăмахран, пĕр çапăçурах нимĕçсен 48 танкне чарса лартнă, хăшне çĕмĕрнĕ, хăшне çунтарса янă. Унтан, пурĕ те 11 çын çеç юлсан та, пĕр рубежра нимĕçсен батальонне икĕ талăк хушши малалла кайма паман.

—Питĕ хаяррăн çапăçрăмăр çав,—тет Илья Николаевич.—Боеприпассем пĕтрĕç, ахалĕн пулсан татах чакмастăмăр!

Унтан вăл тăшман ункинче пулнă. Хăй çамрăк пулин те, унăн ун чухне нимĕнле звани пулман пулин те, вăл боецсен чылай пысăк группине ункăран илсе тухма пултарнă. Фронт линийĕ патне çывхарнă май унăн группи темиçе хутчен те засадăсем туса вуншар нимĕç салтакĕсене «тирпейленĕ.»

Каллех хамăраннисем патне çитсе тухсан, ăна кĕçĕн лейтенантсен курсне вĕренме яраççĕ. Виçĕ уйăхран вăл миномет взвочĕн командирĕ пулса тăрать. Нимĕçсене Мускав патĕнчен каялла хăвалать. Уварово станцийĕ таврашĕнче хăйĕн взвочĕпех икĕ яла нимĕçсенчен тасатать, унтан Гжатск тăрăхĕнчи хаяр çапăçусенче (фашистсем унта питĕ вăйлă укрепленисем тунă пулнă) кунĕ-кунĕпе йывăç тăррине ларса, хăйĕн взводне ăçта пемеллине кăтартса тăрать. Питĕ те нумай нимĕçе «леш тĕнчене» ăсатнă Павловăн минометчикĕсем ун чух! Çакăн хыççăн ăна татах кĕске вăхăтлăха вĕренме яраççĕ. Вăл унтан тÿрех старши лейтенант пулса таврăнать.

...1942 çул. Август. Хĕвеланăç фронтĕнче эпир тăшманăн оборонине 105 километр сарлакĕш татса, нимĕçсене çĕмĕрсе кĕрсе каятпăр.

Çак çапăçусенче вара Илья Павлов хăй хăюллă та паттăр, нимрен хăраман командир пулнине пит те лайăх кăтартса парать. Пĕрмаях подразделенисен пуçĕнче пулса, вăл темиçе яла йышăнать. Пĕрре танковăй десантпа кĕрсе каять, хăй темиçе нимĕçе вĕлерет. Тепре, ик-виçĕ боецпа пĕрле, нимĕçсем йышăннă яла юланутсемпе кĕрсе каять те, тăшмансен йăвинче ним майсăр паника туса хурать,—çав вăхăтра пирĕн пехота яла çавăрса илет...

Малтан мала кайса пырса, Павловсен чаçĕ ункăна лекнĕ. Фашистсем вĕсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкма шутланă. Анчах совет боецĕсене пурĕпĕр çĕнеймен вĕсем. Тăшманăн пур атакисене те пирĕн боецсем çапа-çапа аркатнă.

Пĕр кунĕнче нимĕçсем тăхăр хутчен контратака тунă, вĕсенчен юлашки—«психикăллă атака» пулнă. Шăпах батальон командирне амантнă та ун чух, Павловăн батальон пуçне тăма тивнĕ.

Малтан нимĕçсем 30 танк янă. Пирĕн боецсем вĕсенчен çуррине яхăн çĕмĕрсе, çунтарса ярсан, юлашкийĕсем каялла тарнă. Унтан нимĕçсен 40 бомбардировщикĕ вĕçсе çитнĕ, вĕсем бомба пăрахман вырăн та хăварман, анчах çĕр ăшне тĕплĕн чакаланса кĕрсе ларнă батальона нимĕнех те тăваймаи. Юлашкинчен вара, совет боецĕсем пĕтрĕç пулĕ тесе, нимĕç батальонĕ ним пĕшкĕнмесĕрех, çаннисене таврса, кăшкăрса, шăхăрса çывхарма тытăннă. Вĕсем пурте ÿсĕр пулнă...

Павлов хăйĕн боецĕсене пеме хушман. Вăл вĕсене пит лайăх хатĕрленсе тăма çеç хушнă.

Акă, нимĕçсем 200 метр таран çывхарнă. Унтан 150, 100... 80—70 метра çитнĕ. Нимĕçсен сăнĕсем те, вĕсем ÿсĕрри те лайăх курăннă халь.

— Огонь!—команда панă Павлов. Çав самантрах пур пулеметсем те, автоматсем те, винтовкăсем те ĕçлеме тытăннă...

Темиçе минутăран чĕррĕн юлнă нимĕçсем упалене-упалене тарнă. Пирĕн окопсем умĕнче 250 нимĕç вилли выртса юлнă.

Ку çапăçура Павлова хытă амантнă (ку унăн тăваттăмĕш суранĕ пулнă, анчах вăл вырăнтах юлнă, батальона çапăçу пĕтиччен ертсе пынă...

Çакăншăн ăна правительство «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăланă.

Иртнĕ хĕллехи çапăçусенче вăл каллех питĕ хастарлă та хăюллă пулчĕ. Пĕрре вунă кун хушши таттисĕр пынă наступлени вăхăтĕнче вĕсен подразделенийĕ çирĕм яла тăшманран тасатрĕ. Павлов вăл наступленире яланах малти ретре пынă. Хĕллех ăна капитан званине пачĕç. Çитес çывăх вăхăтрах вăл майор пулать, ун пирки командовани ыйтса янă.

Çавăн пек ĕнтĕ пирĕн чаçри чăвашсенчен пĕри, çамрăк коммунист, пултарулла командир.

Старши лейтенант Л. АГАКОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Артель çулталăкри плана тултарать

ОКТЯБРЬСКОЕ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). „Труд" артель коллективĕ производство планне çулталăк пуçланнăранпа уйăхран уйăхах тултарса пынă. Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем артель членĕсене татах та тухăçлăнрах ĕçлеме хавхалантарчĕç. Халĕ кашни пĕр туйăмпа — фронта стахановла ĕçпе пулăшас туйăмпа пурăнать. Юлашки уйăхсенче артельте ĕç тухăçлăхĕ чылай ÿсрĕ, артель продукци туса кăларас плана нумай ирттерсе тултарма пуçларĕ. Çапла вара, çулталăкри плана сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 98 процент тултарнă.

Çакăн хыççăн артель коллективĕ хăй умне çулталăкри плана сентябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне пурнăçласа çитерес задача лартрĕ. Çак задачăна пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе нумайĕшĕсем çĕнĕ ÿсĕмсем турĕç. Закройщиксем Е. Осипова, Чубанова юлташсем нормăна 250-шар процент таран тултарса ĕçлеме пуçларĕç, Портнова юлташ икĕ норма ытла тăвать.

Артельте çамрăксене вĕрентес ĕçе лайăх организациленĕ. Ку таранччен 33 çынна вĕрентсе специальноçсем панă.

Н. КОНДАКОВ.

Нормăсене ытлашшипех тултараççĕ

ТАВАЙ. (Телефонпа). Мичурин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Колхоз паянхи кун тĕлне кĕрхи тырăсене вырнă чух нормăна М. Лаврентьев колхозник акара, сеялкăпа ĕçлесе, кулленхи нормăна 156 процент тултарса пычĕ. А. Григорьева, Н. Моисеев, Г. Григорьева сухаçăсем куллен 1,25 гектар вырăнне 1,50 гектар сухаларĕç. И. Андреев сÿреçĕ кулленех икшер норма тултарса ĕçлерĕ. В. Борисов юлташ бригади кĕракине ытти бригадăсенчен малтан вĕçлерĕ.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз государствăна сĕт-çу, аш-какай памалли обязательствăсене пурнăçларĕ, Хĕрлĕ Çар фондне 3,14 центнер аш-какай пачĕ. Çак кунсенчех государствăна тырă тăратмалли обязательствăна та пурнăçлать.

Кĕрхи ака ĕçĕсем «8 Марта» колхозра та ăнса пыраççĕ. Дмитриев, И. Федоров тата ытти колхозниксем 11 ретлĕ сеялкăпа кунне 4—6 гектар тырă акаççĕ, М. Русина, Г. Кириллова сухаçăсем 1,5 гектар сухалаççĕ.

ДАНИЛОВ.

Уйхиртен—шкула

Вăрнарти тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем (шкул директорĕ Илюкин юлташ) каникул вăхăтĕнче Апнер колхозĕнче ĕçлерĕç. Шкул ачисене икĕ бригадăна уйăрнă. 1-мĕш бригадăна учительница Белоусова, 2-мĕш бригадăна учитель Гутман ертсе пычĕç. Çак бригадăсем çум çумланă тата тырă вырнă çĕрте те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç.

Ăмăртура Белоусова юлташăн бригади мала тухрĕ. Вĕсем пĕтĕмпе 10 гектар çум çумланă, 1 гектар пуса, 4 гектар йĕтĕн татнă, 5 гектар пăрça, 8 гектар ыраш, 8 гектар сĕлĕ вырса пуçтарнă. Н. Наумова, К. Иванова, Сидорова, З. Михайлова, Л. Белоусов, Гольтман вĕренекенсем 30—35-шер ĕçкунĕ турĕç. Учительница М. Белоусова хăй çĕр ĕçкунĕ ытла тунă.

Çапла вара вĕсем Апнер колхозне 26 гектар тырă вырса пулăшрĕç.

Халĕ çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ. Хастарлă ачасем кăçал отлично вĕренсе пырĕç, шкула пĕр сиктермесĕр çÿрĕç.

И. БЕЛКИН.

Ют çĕршывсенче

Англипе Канада çарĕсем Кăнтăр Италие пырса кĕнĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çакăн пек специальнăй пĕлтерÿ панă: „Союзниксен Эйзенхауэр генерал ертсе пыракан войскисем малалла куçса пыраççĕ. Паян ирхине ирех Англипе Канадăн 8-мĕш армири войскисем, союзниксен тинĕсри тата сывлăшри вăйĕсем пулăшнипе, Мессина проливĕ урлă атакăласа, Кăнтăр Итали территорийĕ çине пырса кĕнĕ".

Союзниксен войскисем Реджо ди-Калабрия хулине йышăннă

ЛОНДОН, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхине Реджо-ди-Калабрия районĕнче Итали çыранне пырса аннă акăлчансен 8-мĕш çарĕн войскисем противник вăйсăр хирĕç тăнипе çеç тĕл пулнă. Кун каçипех войскăсем пĕр чарăнусăр малалла куçса пынă. Ĕнер кăнтăрла союзниксем Реджо-ди-Калабрия хулине тата хуларан кăнтăртарахри аэродромсене йышăнса илнĕ. Кунсăр пуçне Вилла-Сан-Джованни хулине йышăнса илнĕ. Союзниксен войскисем малалла куçса пыраççĕ. Тыткăна илнисем нумай.

Союзниксен войскисен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 3-мĕшĕнче ирхине Англин икĕ линкорĕ тăшманăн Делларми сăмсахĕ патĕнчи позицийĕсем çине пенĕ.

Союзниксен авиацийĕ Италие тапăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС) Тĕплĕн пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр-хĕвеланăç Африкăри сывлăш-çар вăйĕсене кĕрекен самолетсем ĕнер Çурçĕр, Вăтам тата Кăнтăр Италири çулйĕрсене йышлăн пырса тапăннă.

Больцанора Бреннер ту каççи енчен килекен чугун çул çинчи кĕпере çĕмĕрнĕ. Çавăн пекех Торенгора та Бреннертан килекен чугун çула çавăрса илнĕ, чугун çул кĕперне çĕмĕрнĕ. Болоньере товарнăй станци çине тата складсем çине бомбăсем тĕл ÿкнине палăртнă.

Авиацин ытти соединенийĕсем Канчеллори товарнăй станцие йышлăн пырса тапăннă. Унта нумай тĕлте пушарсем тухнă, взрывсем пулнă.

Кăнтăр Италири чугун çулсем çине тата темиçе тĕлте тăшман позицийĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Самолетсем тăшманăн çыран хĕрринчи баржисене те тапăннă.

Союзниксен самолечĕсем Кăнтăр Италири аэродромсене сентябрĕн 2-мĕшĕнчи çĕрле те пырса тапăннă.

Çак операцисенче тăшманăн 34 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен авиацийĕ 15 самолет çухатнă.

США июль уйăхĕнче туса кăларнă вăрçă хатĕрĕсем

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăра вăрçă хатĕрĕсем туса кăларасси июль уйăхĕнче, июньрипе танлаштарсан, 5 процент ÿснĕ. США-ри вăрçă хатĕрĕсем туса кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен управлени руководителĕ Нельсон калани тăрăх, çакă вăл чылай пысăк çитĕнÿ туни пулать.

Июль уйăхĕнче 7373 самолет туса кăларнă. Çавăн пекех планерсем туса кăларассине те анлăн сарса янă.

Вăрçă карапĕсем туса кăларасси июль уйăхĕнче, июньрипе танлаштарсан, 7 процент ÿснĕ, суту-илÿ карапĕсем туса кăларасси 4 процент ытла ÿснĕ.

Артиллери тупписем, вĕтĕ калибрлă тупăсем, автомашинăсем тата çар хуçалăх материалĕсене туса кăларасси чи çÿлĕ пусăма çитнĕ. „Вăрçă продукчĕсен ытти категорийĕсене туса кăларассине малашне татах та ÿстермелле", тенĕ Нельсон.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ ШУПАШКАРТИ МУЗЫКА ШКУЛНЕ вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет.
Шкула 7 çула çитнĕ ачасенчен пуçласа 13 çула çитни таран илеççĕ.
Виçĕ отделенирен пĕрне кĕме юрать:
а) фортепиано отделенине,
б) оркестр отделенине (сĕрмелли купăс, альт, виолончель, контрбас тата вĕрсе каламалли инструментсем),
в) вокальнăй отделенине /юрлама лайăх сасă пур ачасем валли).
Заявленисене çак сентябрь уйăхĕн 25-мĕш числиччен йышăнаççĕ.
Испытанисем сентябрь уйăхĕн 25-мĕш числинче пуçланаççĕ, октябрь уйăхĕн 1-мĕшĕччен пыраççĕ. Çакна тĕрĕслеççĕ: мĕн таран лайăх илтме пултарнине, музыка каланине мĕн таран лайăх астуса юлма пултарнине тата сасси мĕнлине.
Вĕренме çитес октябрь уйăхĕн 1-мĕшĕнче пуçлаççĕ.
Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары Союзная, 3. Музыкальная школа.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—3—31, издательство конторин — 0—23.
НТ 1820 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.